Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НĂРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N3 (4572) | *1998 çулхи январь (кăрлач) уйăхĕн 10-мĕшĕ, шăматкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Нăрлат район Совечĕн сессийĕнче

***Январĕн 8-мĕшĕнче халăх депутачĕсен Нăрлат район Совечĕн черетлĕ вунтăваттăмĕш сессийĕ пулчĕ***

Совет ларăвĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн финанспа экономика ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен советникĕ Р.Г.Билалов районăн 1997 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен тунă докладран пуçланчĕ. Районăн 1998 çулхи бюджечĕн проектне депутатсене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, финанс пайĕн заведующийĕ Ф.Н.Губайдуллин тăратрĕ. Çак икĕ ыйтăва пăхса тухассине планпа бюджет комиссийĕн председателĕн çумĕн Р.С.Чахмахчев депутатăн содокладне кĕртнĕччĕ. Пренисенче Нăрлат районĕнчи налук инспекцийĕн начальникĕ Г.А.Миннугалиев тата районти тĕп больницăн тĕп врачĕ А.Л.Клементьев депутат тухса каларĕç. Унтан сесси районăн 113184 миллион тенкĕлĕх тупăш тăрăх тата 110360 миллион тенкĕлĕх тăкак тăрăх 1997 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен çулталăк отчетне çирĕплетрĕ тата 1998 çула палăртнă район бюджечĕ çинчен тĕплĕ решени йышăнчĕ. Унпа килĕшӳллĕн район бюджетне 5421,0 пин тенкĕ дефицитпа 89077,7 пин тенкĕлĕх тупăш тăрăх тата 89077,7 пин тенкĕлĕх тăкак тăрăх палăртаççĕ. Ял хуçалăхне, промышленноçпа энергетикăна, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха, транспорта, вĕрентĕве, культурăна тата сывлăх сыхлавне финанслама уйăрмалли укçа-тенкĕ калăпăшĕсене палăртрĕç. Совет çаплах 1998 çулта тухакан тăкаксене, туллин финанслама тивĕçлĕскерсене, çирĕплетрĕ: ĕç укçи, стипендисем, ачасене памалли пособисем, шкул ачисене апатлантарма, медикаментсем тата сурана çыхмалли материалсем туянма дотаци тӳлесси. Икĕ решение те пĕр саслăн йышăнчĕç.

Халăх депутачĕсен Нăрлат районç Совечĕн тата унăн президиумĕн 1998 çула палăртнă тĕп мероприятийĕсен планĕпе депутатсене райсовет председателĕн çумĕ А.Н.Ельченков паллаштарчĕ.

Вунтăваттăмĕш сессин ларăвне Нăрлат район Совечĕн председателĕ Ф.С.Сибагатуллин ертсе пычĕ.



*Мунир Аглиуллин хуçалăхра питĕ кирлĕ çын, унсăрăн механизаторсене йывăр пулнă пулĕччĕ. Пирĕн фотокорреспондент Н.Азизов ăна аккумуляторсен цехĕнче ӳкерсе илнĕ. Кунта юрăхсăра тухнă приборсем унта та кунта выртмаççĕ, хир ĕçĕсенчен пушаннă, хĕле упрама лартнă техникăн аккумуляторĕсене пĕрин хыççăн теприне тирпейлĕн вырнаçтарнă. Вĕсенчен нумайăшне çуркунне усă курма хатĕрлесе пысăк класлă специалист хуçисене парĕ.*

*Мунира тата ытти яваплă ĕçсене те шанса панă. Вăл пăхăрçă та, резина урапisen ăстаçи те. Кĕскен каласан, кунта ĕç çителĕклĕ, анчах Мунир вĕсене пурне те тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама ĕлкĕрет. Кирлĕ пулсан техникăна çӳретме те пултарать. Иртнĕ çул вăл тырçине те активлă хутшăннă, тухăçа пухса илессине пысăк тӳпе кĕртнĕ.*

*Ӳкерчĕкре: "Игенче" ассоциаци ĕçченĕ М.Аглиуллин.*

## "Татарстанта" - çĕнĕ председатель

Иртнĕ юнкун хресченсен хуçалăхĕсен "Татарстан" ассоциацийĕн коллективĕн пĕрлехи пухăвĕнче сăмах, экономикăн хальхи йывăр условийĕсенче хуçаланмалли çĕнĕ форма çине куçасси, тĕпрен илсен, ĕçе кооперативлă майпа йĕркелесси çинчен пычĕ.

Пухăва район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн начальникĕ Ф.М.Давлетшин тата администраци аппарачĕн ертӳçи Ф.М. Галимов хутшăнчĕç тата тухса каларĕç, вĕсем ял çыннисене кăсăклантаракан чылай ыйтусем çине хуравларĕç.

Ф.М.Гильмутдинован заявленине тĕпе хурса, ăна ассоциаци председателĕн тивĕçĕсенчен хăтарнă. Хресченсен кооперативĕсен "Татарстан" ассоциацийĕн совечĕн председателĕ пулма малтан Элкел районĕнчи "Ургагарский" совхоз директорĕ пулса ĕçленĕ Анас Газимович Саматова суйланă.

## Тĕп тимлĕхре

Агропромышленность комплексĕн ĕçченĕсен районти профсоюз комитечĕ, ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн тĕп пайĕсем çак отраслĕн ыйтăвĕсемпе тăтăшах ĕçлĕ канашлусем иртттереççĕ. Çапла, нумаях пулмасть профсоюз комитечĕсен председателĕсем, ĕç сыхлавĕпе хăрушсăрлăх техники енĕпе ĕçлекен инженерсем хутшăннипе иртнĕ канашлура ял хуçалăх ассоциацийĕсен тĕрлĕ участокĕсенче вăй хуракансен ĕç условийĕсене лайăхлатасси, вĕсен ĕç хăрушсăрлăхĕ тата ялан тĕп тимлĕхре пулмалли ытти ыйтусем çинчен каларĕç. Çĕнĕ çул пуçламăшĕнче тĕп экономистсем хутшăннипе иртнĕ канашлура 1997 çулăн итогĕсене пĕтĕмлетес, çĕнĕ çула коллективлă договорсен проекчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе палăртнă задачăсене пăхса тухрĕç.

## "Золушка" патĕнче балра

- çакăн пек ятлăччĕ Президент елкин кăçалхи программи, тăлăх тата çурма тăлăх ачасем валли йĕркеленĕскер. Хусан хулинче январĕн 6-мĕшĕнче унта пирĕн районтан та ултă ача хутшăнчĕ, вĕсене район администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен пай заведующийĕ Р.Ханеева илсе кайрĕ.

Çав сехетсенче ачасем хăйсене чăн-чăн халапра пулнă пек туйрĕç. Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен Тутар патшалăх оперăпа балет театрне кĕнĕ чухне вĕсене пажсем, патша мыскараçисем, клоунсем, патша хăй, графсемпе графиньăсем кĕтсе илчĕç.

Малтан ачасене ТР Президенчĕ М.Шаймиев ăшшăн саламларĕ. Пирĕн патшалăх пуçлăхĕ кăштах хумханни палăрчĕ. Кайран вара чăнчăн халап пуçланчĕ. Венера Ганиева Юр Пике пулса тата ыркăмăллă Хĕл Мучи тухрĕç. Зиля Сингатуллинапа паллă "Иванушки" ушкăн хăйсен юррисене шăрантарчĕç, "Мгновение" ташă ушкăнĕ питĕ илемлĕн çаврăнчĕ, драмтеатрăн балеринисем те "юр пĕрчи" тумĕсемпе чупа-чупа тухрĕç. Елка карнавал тумĕсемпе кайнисем театр сцени çинче Золушкăпа тата Хусан хулинчи эстрада ушкăнĕсемпе пĕрле хаваслă вăйă картинче çаврăнчĕç. Шкул-интернатра вĕренекен Настя Фролова (Хĕрлĕ Калпак), 2-мĕш номерлĕ шкулти Коля Сибулатов (Ковбой) пирĕн районăн тивĕçлĕ представителĕсем пулнине кăтартрĕç. Çӳлтен, сывлăшри хăмпăсем юр çунă пек аялалла илемлĕ анни пурне те питĕ тĕлĕнтерчĕ.



Нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени начальникне М.М.Хузина транспортпа пулăшнăшăн, районти тĕп больницăн тĕп врачне А.Л. Клементьева медицина ĕçченĕсем тата ОГАИ начальникне Х.В. Аюпова ачасене столицăна лайăх кайса килме опытлă сотрудниксем уйăрса панăшăн тав тăватпăр.

**Р.ЮСУПОВА.**

## Нăрлат гербĕ мĕнле пулĕ?

Пирĕн Нăрлат хули - республикăна пăхăнса тăракан хула. Çакă хула историйĕшĕн паллă событи. "Нурлат" сăмах мĕне пĕлтерни çинчен асăнма шăпах вырăнлă пулĕ. Пирĕн хаçатра кун çинчен çырнăччĕ ĕнтĕ, çапах тепĕр хут та асăнăпăр.

"Нурлат" сăмах икĕ сăмахран тăрать теççĕ - "Нурлы" (çутă, пайăрка) тата "ат" (лаша, ут), урăхла каласан, "Нурлыат", калама çăмăлтарах пултăр тесе "Нурлат" кăна, "çутă лаша", "çутă ут" е тата илемлĕрех "çутăлса тăракан ут".

Çакăн пек хулан хăйĕн гербĕ пулмалла. Пирĕн хулан сăн-сăпатне палăртакан эмблемăпа усă курattăмăр: чугун çулĕ, сахăр, нефть.

Çапах та республикăна пăхăнса тăракан хулан гербĕ урăхла пулмалла, "Нурлат" сăмах пĕлтерĕшне, унăн историллĕ пуçламăшне сăнласа паракан символ ытларах килĕшĕ.

Ку чугун çул транспортне палăртнă щит пулма пултарать, мĕншĕн тесен Нăрлат хули чугун çултан пуçланса кайнă. Çӳлерех, хĕрлĕ тĕс çинче, лаша е çутă кăвак тĕс çинче ылтăн сарă ут. Çӳлте Тутарстан ялавĕ тĕслĕ ансăр йĕр, ун çине "Нурлат" тесе çырмалла.

Çакăн пек герб Тутарстан гербĕпе килĕшӳллĕ пулĕччĕ.

**И.САНДЛЕР.**

## ТАВ ÇЫРĂВĔ

*Хаçат урлă эпир Нурлат Октябрь вăрлăх станцийĕн директорне Р.Н.Садыкова тав тăвас тетпĕр. Вăл пирĕнпе пĕртăвана Александр Иванова çара ăсатнă чухне питĕ пулăшрĕ. Мĕнле ыйтупа кайсан та вăл яланах тимлĕ итлет, канаш парать, пулăшать.*

***ИВАНОВСЕН çемйи.***
*Ключи поселокĕ.*



*Çар ĕçне 28 çул хушши вĕрентекене халĕ сайра тĕл пулатăн. Юрий Яхвуновăн ĕç стажĕ шăп çавăн чухлĕ. Хусанти патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ хыççăн Юрий Никифорович физкультура учителĕ пулса пĕр çул çеç ĕçлеме ĕлкĕрнĕ пĕрремĕш номерлĕ шкул-гимназире. Кайран тăван Якаел ялне куçса кайнă. Вырăнти шкулта пуçламăш çар хатĕрленĕвне вĕрентме тытăннă. Çак вăхăт хушшинче предмет ячĕ темиçе те улшăннă - пуçламăш çар хатĕрленĕвĕ, пурнăçпа ĕç хăрушсăрлăхĕн никĕсĕсем, гражданисене çар ĕçне хатĕрлесси, çапах та пĕлтерĕшĕ çавах юлнă: çамрăк ăрăва çар ĕçне хатĕрлесси, патриотла воспитани парасси. Çулсем иртнĕ май Юрий Никифорович хăйĕн предметне лайăх пĕлсе çитнĕ, питĕ пуян база туса хунă, ăна кăтарту пособийĕсемпе пуянлатнă. Çав вăхăтрах çамрăк чухне суйласа илнĕ профессине те манман. Яланах спортпа туслă, ачасене те ăна юратма вĕрентет. Тĕрлĕ секцисем, кружоксем илсе пырать. Малтанхи пекех çамрăк, çĕкленӳллĕ кăмăллă пулма ăна шăпах спорт пулăшать.*

*Ӳкерчĕкре: Якаелĕнчи вăтам шкул учителĕ Ю.Яхвунов.*

*Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.*

## Узбекистантан килтĕн-и? Регистрацилен

**Нăрлат хулин урамĕсенче тата пасарта Хĕвелтухăç çыннисене час-часах куратăп. Районта вĕсене мĕнле йĕркелесе тăраççĕ? Çĕнĕрен килекенсене регистрацилемелли ятарлă йĕрке пур-и?**

**Т.ЕВСЕЕВА.**
**Нăрлат хули.**

*Сак ыйтăва ăнлантарса парас тĕлĕшпе пирĕн корреспондент РОВДăн паспортпа виза службин аслă инспекторне Е.Ефремована панă. Вăл акă мĕн каласа парать:*

- Раççей Федерацийĕн тулашĕнче, СССРта пурăнакан гражданисем Тутарстан Республикине мĕнле тĕллевпе килнине пăхмасăр регистрацилеме. Вĕсене ОВДăн паспортпа виза служби учета тăратать.

Узбекистантан тата Таджикистантан килекенсенчен нумайăшĕ коммерци тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, суту-илӳ тăваççĕ. Регистраци правилисемпе килĕшӳллĕн вĕсем регистрацишĕн укçа тӳлеççĕ.

Вăхăтлăха пурăнма килнисене 45 талăка регистрацилеççĕ. Ун чухне вĕсен аллине кунта пурăннине çирĕплетекен хут (листок прибытия) параççĕ.

Вĕсенчен нумайăшĕ регистрациленессинчен пăрăнма тăрăшаççĕ, ку вара закона пăсни шутланать.

Пирĕн районта сезон вăхăтĕнче строительство ĕçĕсем пурнăçлакан бригадăсем нумай. Вĕсене пурăнакан вырăнсенче регистрациленине, вĕсен документĕсене милици ĕçченĕсем, участоксенчи инспекторсем тĕрĕслеççĕ. Сезонлă ĕçе пурнăçлакансен - СНГ гражданĕсем çаплах пирĕн паспортпа виза службинче регистрациленеççĕ, анчах предприятисемпе организацисем чĕннипе ĕçлеççĕ пулсан вĕсем уншăн укçа тӳлемеççĕ.

1997 çулхи сентябрь уйăхĕнчен пуçласа ĕçлеме килнĕ ют çĕршыв гражданĕсене Тутарстан Республикин миграци служби ирĕк парсан çеç регистрацилеççĕ. Администраци пуçлăхĕ ют çĕршывран килнĕ ĕç вăйĕпе усă курни юрăхлă пулни çинчен пĕлтернĕ заключени пулсан çеç ĕç паракан çак ирĕке йĕркелет. Çак правилăсене пăснăшăн ĕç паракансем Раççей Федерацийĕн тата Тутарстан Республикин законĕсемпе килĕшӳллĕн явап тытаççĕ.

Тутарстан Республикине килнĕ ют çĕршыв гражданĕсене палăртнă йĕркене пăсса ĕçе илнĕ пулсан, вĕсене МВД органĕсем Тутарстан Республикинчен ĕç паракансен шучĕпе кăларса яраççĕ.

Ют çĕршыв гражданĕсене чĕнсе илекенсене е йышăнакансене тата вĕсене пурăнмалли вырăн паракансене палăртнă йĕркепе вăхăтлă регистрацилессине тата каяссине тивĕçтермесен 20 чи пĕчĕк ĕç укçи таран штраф параççĕ.

**Этем тата закон**

# Кивçен парса сиен тӳсни е Çиччĕ виç те пĕрре кас

***Çĕршывра экономика лару-тăрăвĕ çивĕчленнипе Уголовнăй Кодекс пăхса хăварман тĕрлĕ квалификациллĕ укçа операцийĕсем çĕнĕрен "вăя кĕчĕç". Вĕсенчен пĕри - калаçса татăлса кивçен илнĕ укçана тавăрса паманни. "Укçана кивçен икĕ ен калаçса татăлса килĕшнипе параççĕ, - тет РОВДăн криминаллă милицин начальникĕ В.Гаврилов. - Пĕр ен пĕрле килĕшӳре пăхса хăварнине пурнăçламанни преступлени пулмасть, çавăнпа та айăплине уголовнăй явап тыттараймастпăр". Çăмăл майпа укçа тума юратакансем Уголовнăй Кодексăн çак "йăваш" енне пĕлеççĕ пулас, çавăнпа та унпа усă кураççĕ. Вĕсем мĕнле майпа та пулсан укçаллă çынсен шанăçне кĕрсе вĕсенчен кивçен укçа илеççĕ. Вĕсен "кредиторĕсен" вара хăйсен интересĕсем: кивçен укçа панăшăн процент тӳлеме палăртаççĕ, çавна май хăйсен капиталне ӳстереççĕ. Кайран палăртнă тăрăх, час-часах кредиторсемпе кивçен илекенсем пĕр-пĕрне сахал пĕлни курăнать. Укçана тавăрса памалли вăхăт çитсен вара парăмлă çын парăма тавăрса парайманнине е пачах та çухалнине курсан çеç кредитор ăнланса илет.***

***В.Гаврилов пĕлтернĕ тăрăх, çак тĕлĕшпе милицие улталаннă гражданисем заявленисемпе нумай пыраççĕ.***

***Анчах та ку ĕçсенче криминал çуккипе вĕсем закон тăрăх çак ыйтусене татса параймаççĕ, ӳкĕте кĕртмелли çеç юлать.***

***Хальхи вăхăтра çак лару-тăрăва суда заявлени парса çеç татса пама пулать.***

***- Кăçал кăна " парăма шыраттарса илме" 20 яхăн ĕç пăхса тухнă, вĕсем тĕлĕшпе кивçен илнĕ укçана тавăрса пама йышăннă, - тет Нăрлат районĕн халăх судйи Ф.Ш.Галимова. Граждан кодексĕн 808-мĕш статйипе килĕшӳллĕн укçана кивçен памалли килĕшĕве çырса тумалла, çавăнпа та çакăн пек ĕçсене тивĕçлĕ расписка пулсан çеç пăхса тухаççĕ.***

***Çырса туман килĕшӳпе улталаннă çынсем вара мĕн чухлĕ-ха тата! Кӳршĕ районсенче çакăн пек ĕçсем пирĕн патри пекех анлă сарăлман-ха.***

***- Мĕншĕн-ха çапла?***

***Мĕншĕн тесен ытти районсемпе танлаштарсан, пирĕн районта пурăнакансем укçаллăрах: нефтяниксем, сахăр вĕретекенсем, предпринимательсем...***

***Тепĕр сăлтав вара çынсенчен чылайăшĕ юридически ĕçсем тĕлĕшпе компетентлă пулманни. Вĕсемшĕн банк тĕслĕх пулса тăмалла. Клиент укçана тӳлеме пултарнине тĕрĕслемесĕр вĕсенчен пĕри те ссуда та, кредит та памасть.***

***Аяларах илсе кăтартнă тĕслĕхсем ыттисемшĕн урок пулса тăрасса эпир шанатпăр.***

Д. гражданин П. гражданкăна 20 процент тӳлемелле 6 миллион тенкĕ кивçен парать.

**Граждан Кодексĕн 807-мĕш статйи: "Кивçенле калаçса татăлнă чухне пĕр ен (кивçен паракан) тепĕр ене (кивçен илекен) укçа е урăх япаласем парать, кивçен илекен вара кивçен паракана çавăн чухлех укçа е илнĕ япаласен пахалăхĕпе пĕр свĕрлисене тавăрса пама тивĕçлĕ."**

Д. гражданин укçине каялла 9 уйăх хыççăн илеймен, заявлени çырса кивçен илекене суда панă. Суд кивçен илнĕ укçана тавăрса памалла тунă, çакăнтах процентсем тата суд тăкакĕсем кĕреççĕ.

**810-мĕш статья: "Кивçен илекен укçана кивçен паракана вăхăтлă тата килĕшӳре пăхса хăварнă йĕркепе пама тивĕçлĕ. Килĕшӳре укçана каялла хăçан тавăрса памаллине палăртман е хăçан ыйтнă çавăн чухне памалла пулсан укçана кивçен паракан ыйтнă хыççăн 30 кун хушшинче тавăрса памалла".**

Суд йышăннă хыççăн чи кăткăсси - ăна пурнăça кĕртесси. Çапла шутлаççĕ суд ĕçне пурнăçлакансем. Ку тĕлĕшпе 5 кун параççĕ. Çак вăхăт хушшинче суд йышăнăвне пурнăçламан пулсан, ирĕксĕрлесе йышăннă мерăсемпе усă кураççĕ (2 уйăха) е, урăхла каласан, кивçен илекенĕн куçса çӳрекен пурлăхне туртса илеççĕ. Çакă пулăшаймасть пулсан, мĕнпур парăма тӳлеме ĕç укçин 50 процентĕнчен пуçласа 70 проценчĕ таран тытса пыраççĕ. Ку мера та витĕм кӳмесен, кивçен илекенсем ытларах ниçта та ĕçлемеççĕ е пасарта суту-илӳ тăваççĕ, суд парăма кĕнĕ çыннăн тăванĕсенчен ыйтать. Çакă та пулăшайманни паллă ĕнтĕ.

- Çавăн чухне вара кивçен паракан нимсĕр тăрса юлнине ăнланать, урăх нимĕн те тăваймасăр, парăма кĕнĕ çын хăйĕн хваттерĕпе тӳлетĕр тет, - анчах та закон тăрăх, кивçен илекенĕн куçман пурлăхĕ хăйĕн çеç мар, унта упăшкин, ачисен пайĕсем те пур. Парăма кĕнĕ çын çемйинче мăшăрлану килĕшĕвĕ пур пулсан унăн пайне суд парăма татма туртса илме пултарнă пулĕччĕ.

Илсе кăтартнă тĕслĕхре шăп çавăн пек лару-тăру: виçĕ ача, хваттерти кивĕ пурлăх - нимĕн те туртса илме çук, парăма кĕнĕ çын хăй ниçта та ĕçлемест.

Суд практикинче процент ставкин суммине палăртман килĕшӳсем те тĕл пулаççĕ. Çакăн пек чухне **Граждан Кодексĕн 309-мĕш статйинчи 1-мĕш пункчĕ "Килĕшӳре процентсен калăпăшне палăртман пулсан, вĕсен суммине банк кредичĕн ставкипе палăртаççĕ". 3-мĕш пунктĕнче çапла çырнă: "Гражданисем калаçса татăлнă сумма закон палăртнă чи пĕчĕк ĕç укçинчен 50 хут ытларах пулмасан тата иккĕшĕнчен пĕри те предприниматель ĕçĕпе çыхăнман пулсан, кивçенле калаçса татăлни процентсăр шутланать".**

Б. гражданка Е. пĕлĕшĕнчен çемье нушисемшĕн кирлĕ тесе 4 миллион тенкĕ йӳтетсе илет. Процент ставкине палăртмасăрах килĕшӳ тăваççĕ. Е. гражданка кивçен панă укçине илес тесе судран пулăшу ыйтать, анчах та кивçен илнĕ çын ăçта пулни те паллă мар иккен. Суд ĕçне пурнăçлакан Б. гражданка пĕр предприятире пĕр уйăх ĕçленине палăртнă, кивçен илекенĕн ĕç укçинчен кивçен паракана 1 миллион тенкĕ тавăрса панă, ытти 3 миллион тенки вара çилпе вĕçсе кайнă.

Судра кивçен панă договорсене пăхса тухнă чухне, виççĕмĕшĕ, ку ĕçпе тӳрĕрен çыхăнман ен сиен тӳсет. Сăмахран, машина туянас шухăш тытнăскер, кӳршĕри республикăра пурăнакан лайăхах пĕлмен пĕр çынна 7,5 миллион тенкĕ парать. Анчах та вăхăт иртнĕ, машина вара çук та çук.

Укçа паракан Граждан Кодексĕн 307-мĕш статйине тĕпе хурса, судран укçине тавăрса е автомашина парассинче пулăшма ыйтнă.

Суд ĕçне пурнăçлакан çак ĕç тĕлĕшпе суд решенине пурнăça кĕртме тытăнсан, парăмлă çын куçран çухалать. Кунта çакна та палăртса хăвармалла, суд ĕçне пурнăçлакана пысăк правасем панă. Акă кунта та, суд ĕçне пурнăçлакан хăйĕн прависемпе туллин усă курса, парăмлă çыннăн хăйĕн автомобиль пулни, ăна ăçта-тăр кайса сутнине палăртнă. Виççĕмĕш "сăнар", машинăшăн укçа тӳленĕскер, ăна хăйĕн ячĕ çине куçарттарса ĕлкĕреймен, çавăнпа та законпа килĕшӳллĕн машинăна тавăç пуçаракана параççĕ.

Çак тĕслĕх халăх юридически ыйтусене лайăх пĕлменнине тепĕр хут çирĕплетет. Çӳлерех палăртнисене халăх сăмахĕсемпе пĕтĕмлетме пулать пулĕ: "Алăпа паран, кайран урапа çӳрен" е "Çиччĕ хут виç те пĕрре кас".

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**



# 1998



### Кăрлач - Январь

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| Ы. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| Ю. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| К. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| Э. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| Ш. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| В. | 4 | 11 | 18 | 25 | |

### Нарăс - Февраль

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 2 | 9 | 16 | 23 |
| Ы. | | 3 | 10 | 17 | 24 |
| Ю. | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| К. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| Э. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| Ш. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| В. | 1 | 8 | 15 | 22 | |

### Пуш - Март

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| Ы. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| Ю. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| К. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| Э. | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| Ш. | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| В. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |

### Ака - Апрель

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| Ы. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| Ю. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| К. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| Э. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| Ш. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| В. | 5 | 12 | 19 | 26 | |

### Çу - Май

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 4 | 11 | 18 | 25 |
| Ы. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| Ю. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| К. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| Э. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| Ш. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| В. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |

### Çĕртме - Июнь

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| Ы. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| Ю. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| К. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| Э. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| Ш. | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| В. | 7 | 14 | 21 | 28 | |

### Утă - Июль

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| Ы. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| Ю. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| К. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| Э. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| Ш. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| В. | 5 | 12 | 19 | 26 | |

### Çурла - Август

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| Ы. | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| Ю. | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| К. | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| Э. | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| Ш. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |
| В. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 | |

### Авăн - Сентябрь

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| Ы. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| Ю. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| К. | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| Э. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| Ш. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| В. | 6 | 13 | 20 | 27 | |

### Юпа - Октябрь

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 5 | 12 | 19 | 26 |
| Ы. | | 6 | 13 | 20 | 27 |
| Ю. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| К. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| Э. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| Ш. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| В. | 4 | 11 | 18 | 25 | |

### Чӳк - Ноябрь

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| Ы. | | 3 | 10 | 17 | 24 | |
| Ю. | | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| К. | | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| Э. | | 6 | 13 | 20 | 27 | |
| Ш. | | 7 | 14 | 21 | 28 | |
| В. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 | |

### Раштав - Декабрь

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Т. | | 7 | 14 | 21 | 28 |
| Ы. | 1 | 8 | 15 | 22 | 29 |
| Ю. | 2 | 9 | 16 | 23 | 30 |
| К. | 3 | 10 | 17 | 24 | 31 |
| Э. | 4 | 11 | 18 | 25 | |
| Ш. | 5 | 12 | 19 | 26 | |
| В. | 6 | 13 | 20 | 27 | |

***"ТУСЛĂХ" хаçата кашни уйăхранах çырăнса илме пулать***


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нăрлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хут-чен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нăрлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 856.